ХЫПАР

2014 • 22 №
НОЯБРЬ

# КАПКӐН

16+




С.Мягков ӳкерчӗкӗ

**– Ӗҫпе хӳтлӗх – хамӑрта!**

– Нам все нормативы по плечу!

**КАПКĂН**
**Сатирăпа кулăш журналĕ**
**1925 çулхи пуш уйăхĕн**
**16-мĕшĕнче тухма пуçланă**
**22 (1622)№**
**ноябрь/чӳк**

**Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăйтытăмлă учрежденийĕ**

**Директор-тĕп редактор – В.В. ТУРКАЙ**

**Редактор – Н.П. Петров**
**Художник – С.Б.Мягков**
**Калăплавçă – Е.А.Трофимова**

**Журнала почта уйрăмĕсенче, «Чăвашпичет» тата «Советская Чувашия» киоскĕсенче, редакцире çултталăкĕпех çырăнтараççĕ**

**Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи раштавăн 12-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00308 номерпе регистрациленĕ.**

**Индекс – 24608**
**Пичете алă пуснă: 19.11.2014**
**Пичетленĕ: 27.11.2014**
**Хут формачĕ 60х84/8**
**Усл.п.л. 1,5**
**Тираж 1425 экз.**
**Заказ К-2332**
**Ыйтмалли телефонсем: 56-09-31, 56-00-67, 62-50-06.**
**Редакципе издатель адресĕ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев пр., 13.**
**факс: (8352) 62-50-06, 28-83-70**
**www.hypar.ru**
**e-mail: atal-volga@mail.ru**
**Журнала «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, тавăрса памаççĕ. Журналăн юрăхсăр экземплярĕсем тĕл пулсан издательство типографине пĕлтермелле.**
**Кунти материалсене «Капкăнран» илнине асăнмасăр тепĕр хут усă курма юрамасть.**

# Айăплисемшĕн саккун çирĕп пулмалла

Нумаях пулмасть республика тăрăх çакăн пек пĕлтерӳ çиçĕмле хăвăртлăхпа саланчĕ: «Чăваш Ене Мускавран ПАИ сотрудникĕсем килнĕ! Асăрханăр!». Тĕрĕссипе мĕн пулса иртнĕ-ха? Тĕп хуларан йĕркелĕх хуралçисем чăнах килнĕ-мĕн, анчах кама та пулин хăратас, шар кăтартас тĕллевпе мар.

Лару-тăрăва Сергей Волков, Раççей Шалти ĕççен министерствин çулçӳрев хăрушсăрлăхне тивĕçтерес енĕпе ĕçлекен ятарлă центр уйрăмĕн пуçлăхĕ, акă мĕнле ăнлантарса пачĕ:

– Пирĕн тĕллев – çулсем çинче аварисем час-часах пулакан регионсене методика тата практика енĕпе пулăшасси. Руль умне ӳсĕрле ларакансене, çулçӳрев правилисене сĕмсĕррĕн пăсакансене эпир каçармастпăр.

Чăн сăмах, айăплисемшĕн саккун çирĕп пулмалла. Кирек кам – пуçлăх е шалти ĕççен органĕнче ĕçлекен «чăнкă» офицер – йĕркене пăснă пулсан явап тытма тивĕç.




**Çул-йĕр правилине пăсрăн – явап тыт!**
Нарушил ПДД – отвечай!
**С. Мягков ӳкерчĕкĕ**

## Пайтаçăн вăрттăн çулĕ

Патшалăхран тупăшне пытарса юлма хăтланакан пайтаçăсем паян сахал мар. Ара, унтан налук тӳлемелле-çке. Тар тăкса тунă укçаран хăпма йывăр çав.

Çĕрпӳ районĕнче пайтаçă налукçăсенчен тупăшне пытарма хăтланнă та саваламан сак çине лекнĕ. Транспорчĕпе пассажирсене турттараканскер юлашки виçĕ çулта час-часах усламне пĕчĕклетсе кăтартнă. Çапла майпа 950 пин тенкĕ налук тӳлессинчен пăрăннă. Пăтранчăк шывра пытанасси пулман, çакланнă.

**Л. АЛА**




## Вăрман кусли

Тăвай районĕнче йывăçа саккунсăр майпа каснăшăн вырăнти вăрманçăна айăпланă.

Вăрмар районĕнчи суд 51 çулти Юрий Емельянов тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе тĕпчесе пĕтернĕ ĕнтĕ.

2013 çулхи январь уйăхĕнче çак арçын саккунпа килĕшӳсĕр ултă çынна Тăвай вăрманлăхĕнче чăрăш касма ирĕк панă. Çавна май ЧР Çут çанталăк министерствине 76 пин ытла тенкĕлĕх сиен кӳнĕ.

Çав çулхинех май уйăхĕнче тепĕр çынна йывăç касма ирĕк панă. Ку хутĕнче те çак арçыннăн йывăç касмашкăн нимĕнле документ та пулман. ЧР Çут çанталăк министерствине 46 пин ытла тенкĕлĕх шар кăтартнă.

Унсăр пуçне 2013 çулхи май уйăхĕнчех пĕр гражданин тĕлĕшпе административлă йĕркене пăсни çинчен суя протокол çырса хатĕрленĕ.

Республика прокуратурин хирĕçлевĕ тăрăх – гражданина административлă яваплăх тыттарни çинчен калакан йышăнăва пăрахăçланă.

Следстви вăхăтĕнче Юрий Емельянов хăйĕн айăпне пĕтĕмпех йышăнман. Суя протокол йĕркеленине хирĕçленĕ. Анчах та суд ларăвĕнче айăпа йышăнма тивнĕ. Çавна май тăкака кăштах саплаштарнă. Ӳкĕннине шута илсе суд Емельянова 1 çул та 4 уйăха условнăй майпа ирĕкрен хăтарнă.

**В. ПЕТРОВА**

## Çăмăл укçа пуçа хыçтарать

Республика прокуратури наркотик хатĕрлемешкĕн вăрттăн лаборатори йĕркеленĕ преступниксен ушкăнĕ тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе суда ярса панă. 25-36 çулсенчи çамрăксене наркотик хатĕрлеме, вĕсене сутма хăтланнăшăн айăплаççĕ.

Следстви палăртнă тăрăх – 2013 çулхи сентябрь-октябрь уйăхĕсенче çак ушкăна кĕрекен çамрăксем Шупашкарта тара тытнă хваттерте амфетамин (психотроплă япала) хатĕрлеме тытăннă. Вĕсенчен виççĕшĕ ăна тĕп хулара вырнаçтарма палăртнă. Анчах та вĕсен усал шухăшне Наркотĕрĕслев сотрудникĕсем татнă.

Следовательсемпе сотрудниксем преступниксене тăрă шыв çине кăларас тĕлĕшпе чылай тăрăшнă: лаборатори хатĕр-хĕтĕрĕпе хими япалисене, наркотик хатĕрĕсемпе психотроплă япаласене туртса илнĕ, саккунсăр майпа йĕркеленĕ лаборатори ĕçне чарса лартнă.

Пакунлисем преступниксенчен 110 грамм психотроплă япала (кунтах амфетамин та пур) тата 133 грама яхăн марихуана туртса илнĕ. Çамрăксем вĕсене наркăмăшсене улăштарас тĕллевпе тупса палăртман çынсенчен илнĕ. Ĕçе Шупашкарти Калинин район судне пăхса тухма панă.

**В. МАКСИМОВА**

**Валентин КОНСТАНТИНОВ**

# УЛТАВҪӐ



Пирӗн ялта Сысна Ваҫҫи пур. Мӗн-и, пӗр-икӗ ҫул каялла ял халӑхӗнчен йӳнӗ хакпа сысна ҫурисем туяннӑ та Канаш пасарӗнче хаклӑпа ярӑнтарнӑ тет. Хуларан самаях хулӑн кӗсьепе таврӑннӑ-мӗн. Чике тӑршшӗ лартнине пӗлсен ҫынсем хытах тарӑхнӑ. Суйма пӗлекен сутма та пӗлет ҫав. Хайхискере Сысна Ваҫҫи тесе чӗнме пуҫланӑ....

Халӗ ҫак ҫынна ялта Хӑлаҫ Ваҫҫи ят пачӗҫ. Нумайччен чӗнӗҫ-ши ӑна ҫапла – паллӑ мар. Ахӑртнех, тепре кама та пулсан чике тӑршшӗ лартиччен.

Суйма, лартма вара Ваҫҫа чӑнахах та ӑста. Ҫӗнӗ ят ун ҫумне акӑ епле ҫыпҫӑннӑ.

Пӗррехинче Кӗтерне кинемей пулӑшу ыйтма Ваҫҫа патне пынӑ.

– Ваҫҫа, – йӑлӑннӑ вӑл, – тархасшӑн, ҫӑл алтса пар. Никам патне те кайма пӗлмерӗм – пурте ӗҫре. Эсӗ пушӑ ҫӳренине куртӑм та чӗнсе пӑхас терӗм...

– Алӑ усса ларнипе ӗҫ пулмасть. Паянах шыв ҫырама пуҫлатӑп, – килӗшнӗ Ваҫҫа.

Чӑн та, вӑл нумай кӗттермен, тепӗр чӗрӗк сехетрен кинемей патне кӗреҫе йӑтса кайнӑ, пилӗк таранах хывӑнса ӗҫе пикеннӗ.

Кӗтерне кинемей лаҫра апат хатӗрлеме ӗлкӗрнӗ ҫӗре Ваҫҫа хашкаса кӗрсе тӑнӑ.

– Вҫо, – тенӗ вӑл татӑклӑн. – Ҫӑл хатӗр. Шывӗ те пур. Пурине кӑна вырнаҫтармалла.

Кӗтерне кинемей Ваҫҫа хыҫҫӑн ҫӗнӗ ҫӑл патнелле утнӑ, лешӗ вара чӑн-чӑн ҫӗнтерӳҫӗ пек кӑмӑллӑн йӑл! кулнӑ, витрене васкамасӑр шӑтӑка янӑ. Васкамасӑрах унтан тулли шыв витрине туртса кӑларнӑ...

Кӗтерне кинемей савӑннӑ, шыв тупнӑшӑн Ваҫҫана эрехпе сӑйланӑ. Эх, уявланӑ та вара лешӗ чаплӑ ҫӗнтерӗве, каҫ пулсан кӑна киле тайкалана-тайкалана тухса утнӑ.

Тепӗр ирхине Кӗтерне аппа ҫӑла пырса пӑхать те, кӗҫех кайса ӳкмест: пӗр хӑлаҫ тарӑнӑшӗнче каткапа шыв лара парать...

Улталанӑ ӑна! Кӗтерне кинемей, тарӑхнине ниҫта шӑнӑҫтарайманскер, кӗвенте илет те Ваҫҫа килне пырса кӗрет.

– Суеҫӗ, хӑлаҫ тарӑнӑш алтса хӑлаҫ тӑршшӗ шӗвӗртсе хӑвартӑн-иҫ!? – ятлаҫнӑ вӑл.

– Мӗн эсӗ, Кӗтерне кинемей, – мӑкӑртатнӑ лешӗ. – Эпӗ ухмах мар-ҫке, кӑштах пуҫпа шухӑшлама пӗлетӗп... Катка ҫӳллӗшӗ пӗр хӑлаҫ. Урӑх мӗн кирлӗ сана.

Ҫакӑн хыҫҫӑн ялта ӑна Хӑлаҫ Ваҫҫи тесе чӗнме пуҫлаҫҫӗ.

**А. Плеханов ӳкерчӗкӗ**



М. Ларичев ӳкерчӗкӗ



В. Иванов ӳкерчӗкӗ

# Ял-йышсӑр ял пулмасть

Пушӑ çурт кашни ялтах пур. Вӗсен шӑпи пурин те пӗрешкел: кил хуçисем вилнӗ, ачи-пӑчи çӗршыв тӑрӑх саланнӑ. Ватӑ çын пек малалла ӳпӗннӗскерсем кичеммӗн лараççӗ. Хӑй вӑхӑтӗнче çак çуртсенче те пурнӑç вӗренӗ-çке: ача-пӑча ҫитӗннӗ, мӑрьерен тӗтӗм тухнӑ, картиш тулли выльӑхчӗрлӗх тӗпӗртетнӗ. Паян вара вӗсенче никам та пурӑнмасть. Çын çӳременрен сукмак та çеремпе витӗннӗ, пахча юпи чалӑшнӑ, хапха ишӗлнӗ. Ашшӗ-амӑшӗн кил-çуртне хупса хуланаллах талпӑнма тивет çамрӑкӑн. Халӗ ялта пурӑнма условисем пурах тейӗпӗр: газ çунать, такӑр çул яла çитет. Анчах ӗç çукки пӗтерет. Чылай тӑрӑхра хуçалӑх саланнӑ. «Çамрӑксен хӑйсен ӗçне пуçармалла», – тейӗ хӑшӗ-пӗри. Анчах пӗр-пӗр ӗç пуçарма укçа кирлине пурте ӑнланатпӑр. Вӑл çук пулсан ӗç малалла каймасть, путланать. Шухӑшпа шур пӳрт лартаймӑн.

Шкул та, клуб та çук пулсан çамрӑка епле тытса тӑрӑн ялта. Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Кивӗ Атикасси ял тӑрӑхне сакӑр ял кӗрет. Маларах кашни ялта тенӗ пекех клуб пулнӑ. Халӗ вара – пӗртен пӗрре. Кивӗ Атикассинче вырнаçнӑ вӑл, ыттисене хупнӑ. Сӑмахран, Анат Çӗрпӳкассинче пуçламӑш классенче вӗренмелли шкула хупнӑ хыççӑн кунта клуб йӗркеленӗ. Халӗ ӑна та хупнӑ. Асӑннӑ ял Етӗрне районӗпе чикӗленнӗ май çамрӑксем ытларах унта çӳреççӗ. Хӗрсемпе каччӑсем çукпа пӗрех кунта. Вырӑнти «Свобода» хуçалӑхра ӗçлекен Саша (хушаматне кӑтартма хушмарӗ) тракторист каланӑ тӑрӑх 3-4 çамрӑк çеç. «Кичем мар-и ялта?» – ыйтатӑп кӑсӑкланса. «Çав тери кичем. Клуб çук», – терӗ вӑл. «Юрать-ха ӗç пур», – малаллах калаçтаратӑп ӑна. «Тепӗр чух вӑл та йӑлӑхтарать», – пулчӗ хурав.

Паллах, çамрӑка ватӑ çынпа танлаштараймӑн. Юн вӗренӗ чухне юрлас-ташлас, тус-юлташпа курнӑçас килет. Ӗçрен ывӑнса таврӑнсан та урам енне туртӑнать вӑл. Карчӑк-кӗрчӗк пек вырт-са сывӑрмасть. Паллах, темиçе çамрӑкшӑн клуба тытса тӑнин те усси çук. Çав вӑхӑтрах вӑтам е аслӑ ӑру пирки те шухӑшламалла. Вӗсем те çынах. Тепӗр чухне уяв е концерт-спектакль йӗркеленӗ май аслисем яшсемпе хӗрсенчен ытларах пухӑнаççӗ. Шкул, клуб, фельдшерпа акушер пункчӗ хупӑнсан ял пӗтесси куç кӗрет. Малтан çуртсем хупӑнӗç, каярахпа ял çӗр çинчен ерипен çухалӗ.

Паллах, ял çыннине те ӑнланмалла. Паян укçасӑр утӑм утаймӑн. Çавӑнпах ӗнтӗ Мускав çулне такӑрлатакан чылайланчӗ. Шел те, тепри унтан ӗçлесе килнӗ укçана та кирлӗ çӗре ямасть. Карланкине чӳхес тӗлӗшпе лавккаран тухма пӗлмест. Ӗç укçине ӗçсе пӗтерсен тепӗр хутчен çула тухать. Сӑра-эрех туянма укçа кирлишӗн Мускава çитиччен каймалла-ши?

«Кунта пурӑнмаççӗ, юнашар çуртра каллех никам та çук, виççӗмӗшӗ те пушӑ, тӑваттӑмӗшӗсен ачи-пӑчи хулара пурӑнать. Килсе çеç каяççӗ», – терӗ пӗлӗшӗм ял урамӗпе паллаштарса. Йӗркипе ларакан тӑватӑ çуртра никам та пурӑнмасть. Хӑраса каймалла! Хирӗç лараканнисен йышӗнче те пушшисем пур. Апла пулсан ялӑн малашлӑхӗ палӑрмасть.

Алса-чӑлха çыхнӑ май йӗп çинчи пӗр куçа асӑрхамасӑр хӑварсан япала сӳтӗлет. Пурнӑçра та çавах: пӗри хупӑнать, тепри саланать. Ял-йыш салансан ял та пӗтет.

**Валентина ПЕТРОВА**



# Пĕр подъездра


А. Плеханов ўкерчĕкĕ

Çап-çамрăк çын аран сулкаланса
пырса кĕрет çĕн çуртăн подъездне.
Хваттерĕн шăнкăравне пусать урса,
тапать эрешлĕ çĕнĕ алăкне.
Пĕлетĕп лайăх унăн ашшĕне –
ĕçлет вăл пысăк çўллĕ вырăнта.
анчах хальччен курман эп ачине:
мĕскер çитмест ăна çак самантра?
Çынна пăхать вăл ўсĕр куçсемпе –
пулать йўтенĕ упăте теме.
Тăрать шлепкепеле, çинçе йĕмпе
мухтанчăк чун – çур пуслăх
«джентельмен».
Вăл ĕçлесе чунне илем кўмест:
ĕç шавĕ вырăнне черкке сасси.
Кĕсйи нихçан укçасăр çўремест –
Çук, хăйĕн мар çав, ашшĕн мăн кĕсйи.
Вăл пурнакан çурт манăн пурнăçри
ман биографи йĕркинче ларать.
Крансен сасси, вибраторсен юрри
кĕрхи çил витĕр халь те янăрать.
Ĕçлеттĕм эп кунта яш-кĕрĕмпе
сулмаклă пуртă-мăлатук тытса.
Çĕрле ларатăм сăвă йĕркипе
ун илемне, чун хăватне тупса.
Вара кун-çулăм çирĕпрех пусса
кĕретчĕ пек тус-йышăм хушшине...
Шухăшскер! Таптать вăл ман чыса!
Пĕлмест вăл çĕнĕ çуртăн хуçине!
«Ку – пирĕн çурт! Ун мар вăл хальлĕхе.
Вĕри чун-чĕринче, ĕç аллипе
ăна хастар йыш ăшăтрĕ хĕлле.
Вăл тутанса курман тар йўççине,
хаяр çил-тăманра шăнман, кўтмен.
Вăл пурнăçăн сив çилĕсем çине
тухса курман: шанман, ĕмĕтленмен.
Умри çуртран – ман ўсĕм ĕçĕнчен
кулать вăл. Эх, ăна шăла çыртса
кашни турпас историйĕ çинчен
ман вĕрентесчĕ пуртă тыттарса.

**Н.ТЕВЕТКЕЛ**


С. Белозеров ўкерчĕкĕ

# Эх, эп юптаруçă пулсан...

Чўрече умĕнче çакăнса тăракан градусник 10 градус сивĕ кăтартать. Çил çук. Йывăç турачĕ çинче кăсăясем валли сало çакса хунăччĕ. Урампа пĕр чарăнми машинăсемпе çуран çынсем хĕвĕшеççĕ. Çерçисем чĕвĕлтетни илтĕнет. Вĕсем пĕр вырăнта лара-тăра пĕлмеççĕ – вĕçкелеççĕ асар-писер! Инçех мар хурăн турачĕ çинче улакурак ларать. Унтан инçех те мар тепĕр улакурак сăмсипе темĕскер чакаланать, сăмсине тасатать-ши? Э-э, çăкăр таткине таккать-иç. Кунта ĕç тухайманнипе юр çине вĕçсе анчĕ. Унта та çăкăр таткине тĕпретеймерĕ. Çавăнпа вăл çын çўремен сукмак çине куçса çимĕçне кăшлама тытăнчĕ. Çав вăхăтра тепĕр куракĕ урам урлă вĕçсе каçрĕ те тупăшлă «тăванĕ» патнелле вирхĕнчĕ. Лешĕ ăна сиссе çўлелле икĕ метра çĕкленмерĕ. Хирĕçсе кайрĕç, иккĕшĕ те ик еннелле сирпĕнчĕç. Хурахăн та ĕçĕ тухмарĕ пулмалла – çăкăрне юр ăшне хурса йывăç çине вĕçсе хăпарчĕ. Çимĕçĕн малтанхи «хуçи» çав тĕле анса юр ăшĕнчине шырама пуçларĕ. Тупрех. Тупăшне çĕклерĕ те вĕçсе хăпарчĕ. Мĕн курнине хут çине çырар тенĕччĕ – кайăксем куçран çухалчĕç.

Çакăн пек пăтăрмахсем çын хушшинче те час-часах пулкалаççĕ. Эп хам пурнăçра ун пеккине чăтса ирттернĕ. «Эх, эп юптаруçă пулсан...», – теесси анчах юлать.

**Н.РОЗОВ таврапĕлўçĕ,**
**Чĕмпĕр хули**



# Курорт вӑл – урӑх тӗнче

## Чӑн пулни

Чылай ҫул каялла мана Каспи тинӗсӗ хӗрринчи пӗр санаторире канма-сывалма тӳр килнӗччӗ. Курорт вӑл – пачах урӑх тӗнче. Кунта нумай чиртен сывалма пулать. Кам ӗмӗтленмест пулӗ курорт ырлӑхне курма. Анчах нумайӑшӗн вӑл ӗмӗтре ҫеҫ юлать ҫав. Курортра ҫынсем пӗр-пӗринпе паллашаҫҫӗ, туслашаҫҫӗ. Ҫӗнӗ ҫемьесем чӑмӑртанаҫҫӗ. Юрату ыратупа вӗҫленни те сахал мар. Курортри пӗр тӗлпулу ҫинчен каласа парасшӑн. Пӗррехинче, кӑнтӑр апачӗ хыҫҫӑн, тинӗс хӗрринче уҫӑлса ҫӳрес терӗм. Пӗр беседкӑра икӗ хӗрарӑм кула-кула тем шавлаҫҫӗ. Вӗсен умӗнче тепӗр хӗрарӑм тӑрать.

Ларакан хӗрарӑмсем ахӑлтатса кулаҫҫӗ. Эпӗ иртсе пыраттӑм та, беседкӑра лараканнисенчен пӗри мана чӗнсе илчӗ.

– Катя! Ҫак ҫамрӑк ҫын пӗчченех ҫӳрет, паллашӑр та, пӗрле ҫӳрӗр, тунсӑхлама килмен кунта, – терӗ.

– Манӑн упӑшка пур, – хирӗҫленҫи пулчӗ Катерина.

Паллашрӑмӑр. Пӗри – Иваново облаҫӗнчен килнӗ доярка. Шӳтлӗ калаҫу малалла тӑсӑлчӗ.

Ҫакӑ паллӑ пулчӗ: дояркӑн упӑшки, бригадирта ӗҫлекенскер, ӗҫкӗпе аташать, ют хӗрарӑмсем патне чупать иккен. Ирхине, улахран таврӑнсан, харкашма, ҫапӑҫма тытӑнать-мӗн. Упӑшки йӗркесӗр пулни чӗре, нерв чирӗсем патне илсе ҫитернӗ ӑна.

Столовӑйра пӗр сӗтел хушшинче апатланакан арҫын ӑна Бакуна хӑнана чӗннӗ. Вӑл, питӗ каяс килет пулсан та, упӑшка пур ҫинче урӑххипе ҫӳрени намӑс тесе килӗшмен. Хӗрарӑмсем ӑна ҫав усал упӑшка кӗвӗҫнине шута илмесӗр турӑ панӑ ырлӑхпа туллин усӑ курма ӳкӗте кӗртнӗ.

Чӑнах та, вӑл Иван Петровичпа виҫӗ хут Баку хулине кайса килчӗ. Иван Петрович ӑна модӑна кура тумлантарчӗ, пӗрле шыва кӗме те илсе ҫӳрерӗ. Катя чиперленсех кайрӗ, паллама та ҫук. Яланах савӑнӑҫлӑ.

Вӑхӑт шӑвать. Юлашки кунсем. Катерина хӑй пуҫласа манпа калаҫу хускатрӗ.

– Эсир йӗркеллӗ ҫын пулмалла, сирӗнпе канашласа пӑхни ытлашши пулмӗ, – пуҫларӗ сӑмахне Катя. – Иван Петровичпа туслашсах кайрӑмӑр, хама телейлӗ ҫын пек туя пуҫларӑм. Иван Петрович та мана юратать пулас, мӑшӑр пулма чӗнет. Вӑл пирӗнпе юнашар районтан, ентеш темелле. Шкул директорӗ. Ҫулталӑк ҫурӑ каялла арӑмӗ вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗнӗ-мӗн. Ҫапӑҫакан-кӗвӗҫекен упӑшкана пӑрахма шел мар-ха. Ачасем ӳснӗ: хӗр качча тухнӑ, ывӑл институтра вӗренет. Упӑшка ачасем ӳкӗтленине те, амӑшӗ ӑс панине те ним вырӑнне хумасть. Иван Петровичӑн виҫӗ кун каяллах каймаллаччӗ те, мана кӗтсе юлчӗ-ха. Кӑмӑлу пулсан яланлӑхах юлӑн тет. Тем тӗрлӗ те шутларӑм ӗнтӗ. Эсӗ, ӑслӑ ҫын, мӗн сӗнӗн-ши?

– Хӑвӑн чун-чӗрӳ мӗн хушать, ҫапла ту, – терӗм. – Ҫула май кӗрсе тухни ӗҫе пӑсас ҫук. Тен телейӳ те Иван Петровичпа пӗрлех пулӗ...

– Ачасем, хуняма ӑнланӗҫ, каҫарӗҫ, анчах ял-йыш каҫарас ҫук, – терӗ Кӗтӗрне сывпуллашса.

**Рев Рубин**



А. Пашков ӳкерчӗкӗ

Светлана АСАМАТ

# Чăн пулман-ши?

Ĕлĕк пĕр йышлă чăваш килне пĕр вырăс кĕрсе тăнă тет те: «Здравствуйте», – тесе сывлăх суннă тет. Сак çинче кăçат сапласа ларакан мучи çавна илтсен ывăлĕнчен: «Мĕн терĕ у?» – тесе ыйтнă. Лешĕ вырăсла пĕлмен: «Тем терĕ, пĕлместĕп. Сăра ăсма ыйтать-ши?» – тенĕ. Мучи пăшатанне кăçатран туртса кăларнă май: «Сăра-и? Кĕнĕ-кĕмен сăра ыйтать. Сăра пуррине ăçтан пĕлет-ши вара? Ав, кăкшăмра пур унта, ыйтать пулсан ярса пар. Тем шутпа килнĕ ĕнтĕ, ярса пар, ĕçтĕр», – тет. Ывăлĕ вырăса пĕр курка сăра тыттарать.

Лешĕ, ланкăртаттарса ĕçсе ярать те хырăмне шăлса: «О-о! доброе пиво, хорошее пиво. Это ваше «Добро пожаловать?» – тет. Мучи, йĕппине чиксе туртнă май ывăлĕнчен каллех ыйтать: «Мĕн терĕ у?»

«Атте, вăл пирĕнтен тупра тата пашалу ыйтать пулмалла», – тет. «Тупра тет-и? Çăнăх пĕтмен, пашалусăр лармастпăр. Тем шутпа килнĕ ĕнтĕ мур илесшĕ, пар, çитĕр, хырăмĕ выçнă пуль», – хĕрхенет мучи. Ывăлĕ вырăса пашалу парать: «Акă, пашалу çи», – тет. Вырăсĕ: «Щи? Это же лепешка. Ну что же, подавайте щи, коль предлагаете», – тесе сĕтел хушшине кĕрсе ларать.

Пурте пĕрре тĕлĕнсе, тепре хăраса каяççĕ. Сĕтел хушшинче саркаланса ларакан вырăс çине кăн-кан пăхаççĕ. Мучи те пĕрре ывăлĕ çине, тепре вырăс çине пăхать: «Мĕн тет вара у?» «Кил хуçине те çи тет пулас», – тет ывăлĕ. Мучи: «Ара, пашалуне хуçса ил те çисе кăтарт, ан хăратăр, чăмлатăр», – тет. Ывăлĕ ашшĕ хушнă пек тăвать. «Ну и где ваши обещанные щи?» – тет вырăсĕ.

Мучи кăçатне чĕрçи çинчен сак çине илсе хурать: «Мĕн терĕ у тата?» – тет. Ывăлĕ: «Пĕлместĕп, пире те çиме хушать пулмалла, эс те çи-ха», – тет. Мучи кăкăрĕ умне çакнă саппунне салтать те: «Ман та çимелле-и? Çиес апла. Кин, яшка антар эппин, тепĕр пашалу хур. Шўтермесĕр çиейместĕп-çке, шăл витмест», – тет катăк шăлне кăтартса. Вырăс та ăна хăй шăлне шаклаттарса кăтартать. Кинĕ пĕр чашăк яшка антарса сĕтел çине пырса лартать. Вырăсĕ чашкине хăй умне туртса илет те яшкине лĕрплеттерме пуçлать. «Ку вырăс ман пăшатанран та шĕвĕртерех. Тепĕр чашăк антар, çиес, вырăспа пĕр сĕтел хушшине ларса çиес-ха», – тет кил хуçи. Кинĕ антарса парать, мучи пашалуне хуçа-хуçа яшкана ярать, пăтратать, васкамасăр сыпма пуçлать.

Вырăс ăна: «Хорошая гостеприимная семья у тебя, хозяин. Дай Бог вам здоровья», – тет. Мучи яшкине сыпнă май: «Чиперех пурнатпăр, пашалупа яшка хамăра та, килен-каякана та çитет, ĕçлетпĕр. Тăрантăн-и, татах та ярса памалла-и?» – тет. Лешĕ: «Я вижу, вы по-русски не понимаете, но гостей радужно встречаете. Хлеб да соль на столе, здравия желаю всей семье», – тет. Мучи ывăлне: «Тем, каллех сăра ыйтать пулас, тултарса пар, ĕçтĕр. Мана та тултарса пар. Шаккаса ĕçесшĕн мар-и у манпа?», – тет. Вырăсĕ сăрине шаккамасăрах ĕçсе ярать, ура çине тăрать те старике пуç таять. «Старик, о чем вы говорите, не понимаю, но скажу, удивлен однако. И сын, и невестка, и детки – опрятные, рубашки-то, одежда-то вон как чудно вышитые. И еда вкусная, и пиво ядреное. А сын-то богатырь, щеголь, настояший щеголь», – тет. Мучи тутине шăлса илет те: «Ан ятла ĕнтĕ, ан ятла, кукăль çук. Кукăльне эпир пысăк уявсенче кăна пĕçеретпĕр, ахаль кун пашалупах çырлахатпăр. Çăкăр та пур, пашалу терĕн те... Пашалуне эпир пăрçа çăнăхĕнчен те, тулă çăнăхĕнчен те пĕçеретпĕр. Ан ятла, мĕн пуррипе çырлах», – тет. Ывăлĕ ăна: «Атте, ăна çекĕл кирлĕ пулмалла, икĕ хут та каларĕ», – тет вырăс кутамкки çине пăхса. Ашшĕ: «Э-э, çекĕлĕ ăна кутамккине çаклатма кирлĕ пуль-ха. Кĕлет умĕнче тăраççĕ унта касса хунă çекĕлсем, парса яр, суйлатăр. Эп вăрмантан татах та касса килетĕп, шел мар, илсе кайтăр», – тет. Вырăс вĕсем калаçнине итлесе: «Благодарствую, погостил у вас, а мне дальше, в путь пора», – тесе алăк патнелле утать.

Ура çине тăнă мучи ывăлне: «Сăра ярса пар, каять пулмалла. Эп те тепĕр курка ĕçетĕп, мана та ярса пар. Сăрине унпа шаккасах ĕçес килет, çынни чипер çынах курăнать», – тет. Вырăспа чăваш тулли куркисене шаккасах ĕçсе яраççĕ. Вырăс пурне те пуç таять. «Хăна туса ятăмăр. Ывăлăм, тух, ăсат. Килнĕ хăнан кайни паха, çулĕ такăр пултăр», – тесе ĕç вырăнне ларать.






– **Атте, паян, тархасшăн, ӳсĕр ан кил-ха..**
– Папа, сегодня пьяным не приходи, пожалуйста...








С. Мягков,
М. Смагин,
П. Козич
ӳкерчĕкĕсем



# Тунтикун – çăмăл кун

Чăнах, тунтикун – йывăр кун теççĕ те, Савели паян çурхи хĕвел пек çиçет.

– Менелник мар пуль те? – ыйтрĕ унтан Прахур.

– Çу-ук!

– Апла тăк ĕç укçи хушса пачĕç-и?

– Каллех пĕлмерĕн.

– Ну... эрех йӳнелнĕ апла...

– Вăт ку çывăхрах! Анчах ун хакĕ, мур майраки, çук, чакман.

Савăнăç сăлтавне хăй ăнлантарчĕ Савели: арăмĕ пĕр кĕленче хĕрли илмелĕх укçа панă-мĕн. Ку вара ир-ирех лавккана чуптарнă, туянса пушатнă хайхискерне. Вăт илемленнĕ тĕнче. Нимĕнле сулăнчăк та çук пурнăçра. Яп-яка. Ăшă...

Ĕненес килмерĕ Прахурăн: арăмĕ питĕ хытă тыткалать Савелие.

– Ăнлантар. Наталие мĕнле çавăртăн?

Юлташĕ куçне хĕсрĕ.

– Сĕтел юсаса патăм.

– Эс тем...

– Чăнах, ара. Кухньäри сĕтел тахçанах лачăртатса кайнă. Карчăк пĕрмай мăкăртатать. Вара пуçа гениллĕ шухăш килсе кĕчĕ: «Пĕр кĕленче эрех!» – терĕм. Мĕн тетĕн, килĕшрĕ...

Савели шăртланнă янахне хавассăн сăтăра-сăтăра илчĕ.

**Аркадий КАЗАНОВ**

# МĂЙРАКА



Вунçиччĕрех качча тухрăм та хĕрĕх çиччĕри арçынна... «Ухмаха ертĕн-и?! – тетчĕç мана, – ват супнăна качча тухса ларатăн!..» Ун чух вăл каккуй «ват супнă»... Кашни кунах ĕçрен шăнкăравлать... Кашни каç çывăрмалли пӳлĕме йăтса кĕрсе вырттарать... Чуптунă вăхăтра анрасах каяттăмччĕ вĕт... Ăçта çӳренĕ, çавăнта темĕн тĕрлĕ чечек татса парнелет, чăнах та чечек вырăнĕнчех усратчĕ мана. Часчасах лавккана кайса япала çине япала туянса паратчĕ, пукане пекех çӳреттĕмччĕ... Тăвайккине улăхнă чух та алăран тытса туххăмрах хăпарма пулăшатчĕ. Юратас умĕн шăккалат илсе çитеретчĕ, чи тутлине те чи хаклине. Ун чух пирĕн пурнăç пыл та çу пулнă!

Халь акă... тарăхнипе ун çинчен калаçас та килмест. Ĕнер эпĕ вăтăр çиччĕ кăна тултартăм, вăл вара тепĕр виçĕ çултан 70 тултарать... Ай, тур-тур, ват супнă! Хайхискерне халь хăйне çырмаран аран-аран туртса хăпаратăп та... Тарăхнипе тĕксе ярăттăм каялла çăва патне... Лĕкĕш-лĕкĕш утать кукăр туйипе, хăй те кукăрălнă, юнашар утма та намăс. Çамрăк хитре арçынсем мана шеллесе иртсе каяççĕ, хăть те çĕр тĕпне анса кай... Манăн çамрăк чĕрем тата арçынсене курнă-курман темшĕн-çке вăйлăрах тапма пуçлать, сиксе тухас пек... Ах, ку ват старикпе!.. Çывăрма выртсан шăлне стакан ăшне кăларса хурать те ним çинчен калаçмалли те çук: чĕлхипе тем лĕпĕртетет, ăнланма та май çук. Çурăмпа çаврăнса выртать те çавăнтах харлаттарса çывăрса каять. Çамрăк арăм еплерех нушаланса выртать-ха унта, э?.. Уншăн пулсан тĕлĕк курса пултăр... «Мĕншĕн ĕлĕкхи пек чечек татса парнелеместĕн?» – тетĕп. «Ун чух ухмах пулнă, сан пек катăк пуçшăн авăнса пилĕке те хуçмастăп», – тет. Вăт сана старик! Шăккалат илсе паманни çĕр çул та çитет пулĕ. Типсе кайнă старикпе юнашар выртма çурăма та сивĕ, юрать-ха грелкă пур. Мĕн тăвăн ĕнтĕ, пилĕк пӳлĕмлĕ хваттершĕнех пуçа чикрĕм, машини те ун чух хăвăрт чупатчĕ те хăй пекех... Ал-ури чĕтренипех сутса ячĕ вĕт мур илесшĕ... Çӳре халь ват супнă хыççăн...

Юлашки вăхăтра тата тем пулчĕ старике, кашни юпа çумне кĕвĕçме тытăнчĕ. «Мĕн, арçынсене курнă-курман шапа пек куçна мăчлаттаратăн? – тет. – Вĕсен умĕнче çĕлен евĕр авкаланатăн?» Ха! епле пакăлтатать вăл! «Куçа çӳп кĕрсен те ăна чарса пымалла-и е хупса утмалла– и? Туясăр пуççăр нимĕн те тытайми пулнишĕн эпĕ айăплă-и? Икĕ пысăк сумка йăтнă чух авкаланмасăр епле утас?!» Шăп çав янраса пынăшăнах тытрăм та сумкăсене старик хулпуççийĕ çине умлăхыçлă çакрăм-ятăм. Ман старик кайрĕ-ӳкрĕ. Тăваттăн аран-аран тăратрăмăр... «Çав кирлĕ те сана!...»

Çиессе вара, ай тур-тур! Хырăмне ăçтан кĕрет-ши? Уншăн какай кăна пултăр. «Мăйрака тухсран çеç сĕре хăратăп», – тесе тек пăшăрханать тата.

Атя, пурăнтăрах, йытă вырăнне киле сыхласа тăтăрах, ирхине эпĕ «хăнаран» ывăнса таврăннă çĕре тутлă апат пĕçерсе лартăрах. Вăт çапла. Ват старикпе те пурăнма пулать иккен, енчен те пĕр-пĕрне ăнланса килĕштерсен.

**Левтина МАРЬЕ**



**– Çиччас тутлă яшка пĕçерсе çитерĕп, малтан вуласа вĕренем-ха...**

– Милый, подожди малость, прочту рецепт, и считай, что ужин готов.

**Г. Яковлев ӳкерчĕкĕ**



# Сăмси пур та...

Тăвата çул çитрĕ ĕнтĕ Таруç качча тухни, Микуç ывăлĕ çурални – виçĕ çул çурă. Таруçпа упăшки уйрăлни... ултă уйăх.

Таруçăн кашни кунах ĕçе çӳремелле. Микуç валли ача садĕнче черет çитмен-ха. Мĕн, ăна килте пĕччен хăвармалла-и? Май çук çав. Ытла та пĕчĕккĕ. Çавăнпа Таруç Микуçпа ларма хăйĕн ялти амăшне чĕнсе илчĕ. Таруçăн амăшĕ хĕрĕхрен иртнĕ кăна-ха та... Кукамай пулма ĕлкĕрнĕ тĕк лартăр килте ача пăхса.

Пит лайăх пурăнаççĕ Микуçпа кукамăшĕ. Уйрăмах вĕсем Таруç йĕркеленĕ альбома пăхма юратаççĕ.

– Кур-ха, кур, кукамай, кунта атте тăнă пулнă, – çатăлтатать Микуç. – Кур-ха, сăмси пур, хăй çук.

– Ытти ăçта кайса кĕнĕ вара? – ыйтать кукамăшĕ.

– Ытти-и? Анне хăйпăтса çурса пăрахрĕ. Акă, кунта та пушмакĕпе шăлавар пĕççин вĕçĕ çеç. Хăй каллех çук. Кулăшла вĕт, э?

Кукамăшĕшĕн кулăшлах мар та... вăл пурпĕрех кулать. Мăнукне кӳрентересшĕн мар.

– Эсĕ хăв ăçта вара кунта? – ыйтать вată çын.

– Ара, кунтах-иç, сан чĕрçӳ çинче ларатăп, – кукамăшне ыталать мăнукĕ.

Таруç ĕçрен таврăнать:

– У-у, ларатăр-и-ха? Вăт, маттурсем!

– Альбом пăхатпăр, – пĕлтерет Микуç.

– У-у, çав альбома! Тахçанах çунтарса ямалла та, кăмака çук.

– Питĕ хирĕçсе пурăнатăр-и вара?

– Хирĕçмесĕр мĕнле пултăр! – тарăхса каять Таруç. – Çынсем, вăн, пĕрле пурăнас тесе çапăçса судлашса пĕтеççĕ, çынсенчен те вăтанма пĕлмеççĕ.

– Ача валли укçа парать-и?

– Парать... Почтăпа ярса парать.

– Судпах уйрăлмарăр пуль те?

– Суда парса пăхтăр-ха, уйрălса пăхтăр-ха! Эп ăна-и? Эпĕ ăна... чĕрĕлле çисе ярап.

– Анне, эпĕ те тутлă-ши вара?

– У-у, – ыталаса умлăнхыçлăн чуптума тытăнать амăшĕ, – эс манăн – чи тутли! Юратнипе халех килле ярса тĕветĕп сана!

Микуç амăшне урăхла ăнланчĕ пулас та, шари çухăрса ячĕ:

– Ай, анне, ан тив мана, ан тив!..

**Василий САМОЙЛОВ**









– Может в музыкальную определим, пока не поздно.

# ЮБКĂПА ИЛĔРТӲЛЛĔРЕХ

Вăхăт нумай иртнĕ пулин те астăватăп-ха, пирĕн кӳршĕ ялта Васса аппа пурăнатчĕ. Ăна пурте «арçын аппа» тетчĕç. Паллах, куç умĕнче мар. Хайне «арçын аппа» тенине вăл аванах пĕлнĕ. Ăна ун пек чĕнме сăлтавĕ те пулнă çав. Васса аппа вăрçă çулĕсенче те, кайран та трактористра ĕçлерĕ. Темшĕн ĕçрен пушансан та вăл хĕрарăм тумне тăхăнмастчĕ. Трактор çӳретнĕ вăхăтра, паллах, вăрăм юбкăпа, кĕпепе майлă мар, хăрушсăрлăх техники те хушмасть. Çук, Васса аппа ĕçлеме пăрахсан та хĕрарăм тумне тăхăнмарĕ. Тен çавăнпах каччăсем унран пăрăнчĕç. Çемье мĕнне пĕлмесĕрех çĕре кĕчĕ вăл.

Васса аппасен ялĕнчех унран кĕçĕнрех Валя пурăнатчĕ. Ытларах кĕске юбка тăхăнса çӳренĕрен ăна «майра» тетчĕç. Пит-куçĕ те, кĕлетки те хитреччĕ унăн. Пĕр хушă хулара ĕçлесе пурăннăранши, ăна вырăс майрин тумĕ килĕшнĕ. Вăл чăваш хĕрарăмĕн кĕпипе çӳренине астумастăп. Валя хăйне кăштах пысăка хуратчĕ. Ăна хамăр е кӳршĕ ял яш-кĕрĕмĕпе çӳренине курман, илтмен. Хула вырăсне качча тухрĕ, кайран вара упăшкине темĕн çитмен, икĕ ачаллă арăмне пăрахнă.

Хĕрарăм тумĕ начар хĕре те илем кӳрет, шалти туйăма хускатать, тыткăнлать, ыталама хистет. Каçхине вăйăа ял хĕрĕсем чăваш тумĕпе тухатчĕç, каччăсем ăмсанатчĕç.

Самана улшăнса пырать, çавна май йăла-йĕрке, мода ылмашăнать. Кашни саманан хăйĕн çамрăкĕ тесе ахальтен каламан ĕнтĕ. «Арçын аппа», «майра» сăмахсем манăçа тухрĕç. Халĕ пурте – арçын-и, хĕрарăм-и – шăлавара килĕштерессĕ. Хĕрачасем сăпкаран уйрăлсанах арçын тумне тăхăнаççĕ, унпах çитĕнеççĕ. Тепĕр чухне çын арçын е хĕрарăм пулнине уйăрма та çук.

Юрĕ, çамрăксен çамрăк ăс. Ваттисем те мода хыççăн «чупаççĕ», çамрăксенчен юласшăн мар. Ватлăхпа илемсĕрленнĕ кĕлеткеллĕскерсем хĕрарăм кĕпи вырăнне шăлавар тăхăнса яраççĕ те тулли хырăмĕсене каçăртса автобус-троллейбуса кĕреççĕ. Кама илĕртесшĕн-ха кинемейсем? Ыттисене кăтартасшăн-ши? Паллах, пурте пĕр пек мар-ха ĕнтĕ.

Хĕрарăм тумне тăхăннă çынсемпе, уйрăмах аслă çултисемпе, калаçас килет. Ун пеккисем çине пăхма та кăмăллă. Хĕрарăм хăй вырăнĕнчех пултăрччĕ. «Арçын аппа» вырăнĕнче пулас марччĕ. Ман шутпа, арçыннăн – арçынах, хĕрарăмăн хĕрарăмах пулмалла. Мода хыççăн хăваласа çутçанталăк панă хитрелĕхе сухатас марччĕ.

**А.ВИШНЕВСКИЙ**




Г. Яковлев ӳкерчĕкĕ



# Купăспа утă çулни

Тимукпа Çинук кӳршĕсем тĕлĕнтерсех яраççĕ. Аншарлие ытараймасăрах çын ĕретĕнчен тухрĕ малтан чипер пурăннă çак мăшăр. Халĕ вĕсем виçĕ кун ĕçлеççĕ те вунвиçĕ кун ĕçеççĕ. Ашшĕ-амăшне кура Çимун ятлă ывăлĕ те ытла ирĕке кайрĕ. Ĕçкĕрен ĕçке купăс туртса çӳрет, кăнтăрла ыйха туртать.

Çаран çулмалли вăхăт çитнĕччĕ. Анкартие вĕсем те сĕлĕпе вика хутăшĕ акнă. Тимук пире, кӳршĕсене, нимене чĕнчĕ.

Хайсенчен латти-пăтти пулас çук тесех каçрăмăр унта арăмпа иксĕмĕр. Пулăшакансем татах тупăнчĕç. Хайсем çеç... Тимукĕ сарай хыçне кайса ӳкнĕ. Çинукĕ çур курка сăрапа тав туса çӳрет. Çимунĕ çавапа виççĕ кассанах пуçне тытса ахлата пуçларĕ.

— Эс, луччĕ, купăс илсе тух! — терĕм кăна тарăхнипе. — Музыкăпа çулăпăр!

Итлерĕ ача, кĕçех сурăм хыçĕнче чăваш юрри янăраса кайрĕ. Хавас кĕвĕ чуна çĕклентерчĕ. Чашлаттаратпăр та чашлаттаратпăр эпир, паккус хыççăн паккус юлать хыçала. Çимун купăса туртать те туртать. Çинук ун умĕнче тапăртатса çаврăнать, Тимук ура çине тăрасшăн упаленет. Эх, çулатпăр курăка. Купăспа!

# Вăрăм çул

Кукаркасри Укахви кинемей анне патне ăшталанса çитрĕ:

— Пирĕн кине курман-и эс? — ыйтрĕ сывлăшне аран-аран çавăрса.

— Иртнĕ эрнере курнăччĕ те, паян курман, — лăпкăн пĕлтерчĕ анне. — Пирĕн патра сĕнксе ларчĕ-ларчĕ те вăл кăмака çумĕнче çывăрчĕ, унтан йĕркеллех тухса кайрĕ.

— Эй, турă, эй, турă, — аллисене шарт! çапать кинемей. — Ара, эпĕ ăна сирĕн пата кăвас чĕресĕ илме ятăм-çке. Халь те çук васка, çичĕ талăк иртрĕ ĕнтĕ çухални.

— Манран вăл кăвас чĕресĕ мар, ĕçмелли ыйтрĕ, — терĕ анне. — Ман нимĕн те çук та — ĕçтереймерĕм.

— Пĕтерчĕ ку кин мана, намăс кăтартрĕ, — хыпăнса калаçать Укахви кинемей. — Ĕçкĕ ăшнех путрĕ. Хĕлимуна та итлемест... Арçынĕсем ĕçре, хăш-пĕр хĕрарăмсем пухăнса лараççĕ те ĕçке пикенеççĕ. Эрни-эрнипе урăлса кураймаççĕ вĕт, мĕскĕнсем. Эх, ĕлĕк пулсан... Пирĕн вăхăтра пулсан...

Анне чӳречерен пăхрĕ те кӳрше лăплантарчĕ:

— Ан кулян, Укахви, кинӳ тупăнчĕ. Авă, килет. Урам урлă каçмалли çулĕ эрненех тăсăлчĕ  пуль çав...

Пирĕн умран Укахви кинемей кинĕпе виçĕ хĕрарăм хăлаçланса юрласа иртсе кайрĕç.

**В.КУЗЬМИН**







**Владислав ПЛАТОНОВ,**
**Шупашкар районӗ, Шоркка ялӗ**

1. Сенкерленчӗ шуҫӑм, ҫеҫкере... (юрӑран). 2. Палланӑ ҫынсем пӗр-пӗрне хирӗҫ пулсан ...! тесе калаҫҫӗ. 3. Чӑн ...ӑн суйи ҫук. 4. Сӑмах ... мар, хыпса ҫӑтса ярайман (ват.сӑм.). 5. 1920 ҫулхи ҫӗртме уйӑхӗн 24-мӗшӗнче ... автономи облаҫне туса хунӑ. 6. Ҫын аллипе ... туртма лайӑх. 7. Ӑна ҫимесӗр ҫын пӗр кун та пурӑнаймасть. 8. Эй, ..., тус – ... ӗмӗр пӗрле пурӑнар (юрӑран). 9. Килте ... – тирӗк шакӑртатмасӑр пулмасть (ват. сӑм.). 10. Мускаври Хӗрлӗ площадьре час-часах ирттереҫҫӗ. 11. Чӑваш Республикин вакун юсакансен хули. 12. Пӗр ...а пӗлмесӗр суять. 13. Ҫыру хатӗрӗ. 14. Лаша пушмакӗ. 15. Тӳпери ... ҫӑлтӑр. 16. «Хура ҫӑкӑр» роман авторӗ ... Микулайӗ. 17. Ҫӑпата виҫи. 18. Пахчари пысӑк хӑяр. 19. Авланман арҫын. 20. ... арӑм усал упӑшкаран та ҫын тӑвать. 21. Библире асӑнман чӗрчун. 22. Тасату жаргонӗ. 23. Кӑмака ҫинче выртнипе .... ҫиеймӗн. 24. Тенкел тӑванӗ.

**Иртнӗ номерте пичетленнӗ капкӑнкаҫмӑш хуравӗсем:**

1. Така. 2. Анаталла. 3. Акар. 4. Рама. 5. Апат. 6. Тура. 7. Алӑк. 8. Контракт. 9. Тӑри. 10. Институт. 11. Трал. 12. Лӑкӑрчӑк. 13. Кали. 14. Ирис. 15. Сарӑ. 16. Ӑста. 17. Асам. 18. Маргарин. 19. Нара. 20. Афродита. 21. Арал. 22. Левенгук. 23.Касу. 24. Урпа. 25. Арат. 26. Танк. 27. Ката. 28. Агентура. 29. Атом. 30. Мерседес. 31. Сорт. 32. Турникет. 33. Трап. 34. Парк. 35. Капа. 36. Агат. 37. Тара. 38. Антрацит. 39. Трак. 40. Каракурт.










Журналти ӳкерчӗксене www.cartoonbank.ru сайтран илнӗ

**Сӑмахсӑрах** Без слов

## Култармăш Тултармăш




– Зря заказали много вкусного, никто не кричит «горько»...

**Н. Никифоров ÿкерчĕкĕ**

## Балаганчик Барабанчик




**– Çĕнĕ кафе уçăлчĕ те – «Васкавлă пулăшу» машинисем ĕлкĕреймеççĕ...**

– Открыли новое кафе и теперь «скорая» не успевает отвозить клиентов...

**С. Мягков ÿкерчĕкĕ**

# Хисеплĕ Вулаканăмăр!

Эс пĕлен: «Хыпар» Издательство çурчĕн кунçулĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланчĕ. Вăхăт пире çĕнĕлле пурăнма, çĕнĕлле ĕçлеме хистет. Эпир сан шанчăкна тӳрре кăларма тăрăшăпăр, эс вара пирĕн кăларăмсене, тархасшăн, çырăнсам.

***«Хыпар»: Вулаканăм, пĕр çулпа утар!***

| Кăларăмсем | Индекс | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
|---|---|---|---|---|---|
| Хыпар | 54800 | 732,66 | 288 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăматкун | 78353 | 304,08 | 150 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 54804 | 358,08 | 234 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 11515 | 325,08 | 222 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 205,02 | 114 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 184,04 | 114 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 54838 | 376,62 | 168 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси–кил | 43887 | 184,08 | 108 | 105 | 81 |
| Тăван Атăл | 11529 | 319,08 | 252 | 246 | 198 |
| Капкăн | 24608 | 185,04 | 150 | 126 | 108 |
| ЛИК | 83429 | 140,36 | 120 | 120 | 100 |
| Тантăш | 54802 | 274,08 | 138 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 181,02 | 162 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 143,52 | 114 | 111 | 90 |

Хакĕ ирĕклĕ